ВСЕСОЮЗНАЯ БИБЛИОТЕКА имени В. И. ЛЕНИНА Отдел Национальной

28-мĕш сул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
28
ЫТЛАРИКУН
166(6917)№

# ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

## СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КИТАЙ РЕСПУБЛИКИ ХУШШИНЧИ ТУСЛĂХПА СОЮЗ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОГОВОРПА ЫТТИ КИЛĔШŬСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТНИ ÇИНЧЕН

Совет Союзĕпе Китай Республики кăçалхи июлĕн 14-мĕшĕпе августăн 15-мĕшĕнчи пĕлтернĕ пек, июнĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 14-мĕшĕччен тата Берлинри конференци хыççăн августăн 7-мĕшĕпе 14-мĕшĕ хушшинче Мускавра СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Китай Республикин Ĕç тăвакан Юлĕ Председателĕпе Сун Цзы-вень господинпа тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕпе Ван Ши-цзе господинпа калаçнă.

Совет синчен калаçусене СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ С. А. Лозовскипе Совет Союзĕн Китайри Поселĕ А. Д. Петров хутшăннă. Китай енчен калаçусене Ют çĕршыв Ĕçĕсен Вице-министрĕ Ху Ши-цзе господин, Китай Республикин Совет Союзĕнчи Посолĕ Фу Бин-чан господин тата Цзян Цзин-го господин хутшăннă.

Калаçса татăлнă хыççăн августăн 14-мĕшĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики хушшинчи туслăхпа союз çинчен калакан Договора алă пуснă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах çак Килĕшŭсене алă пуснă:

Китайри Чанчунь чугун çулĕ çинчен (КВЖД-па ЮМКД çинчен) калакан Килĕшĕве.

Порт-Артур çинчен калакан Килĕшĕве.

Дальний порт çинчен калакан Килĕшĕве.

Япони хирĕç пĕрле вăрçнă май совет çарĕсем Китайăн Хĕвелтухăçĕнчи Виçĕ провинци çĕршывне совет çарĕсем кĕнĕ хыççăн Совет Главнокомандующипе Китай администрацийĕ хушшинчи çыхăнусем çинчен калакан Килĕшĕве.

Тата, унсăр пуçне, Договор тăвакансем пĕр-пĕрне икĕ нота панă:

Монголи Халăх Республикин никама пăхăнманлăхĕ çинчен;

Китайăн Центральнăй Правительствипе пулăму пирасси, Маньчжурие Китая пăхăнтарасси тата Синьцзяне пулса иртнĕ ĕçсем çинчен.

Договора Кремльте алă пуснă. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ хушшипе Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов алă пуснă, Китай Республикин Президенчĕ хушшипе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ван Ши-цзе господин алă пуснă.

Договорпа Килĕшŭсене алă пуснă чухне СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин пулнă.

Августăн 24-мĕшĕнче СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ тата Китай Республикин Законсем кăларакан Юлĕ пĕр-пĕрин хушшинчи туслăхпа союз çинчен калакан Договора тата августăн 14-мĕшĕнче алă пуснă ытти Килĕшŭсене те çирĕплетме тивĕçлисене, пурне те çирĕплетнĕ.

Ăлăрах Договорпа Килĕшŭсен текстĕсене пичетлетпĕр.

## Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики хушшинчи туслăхпа союз çинчен тунă ДОГОВОР

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ тата Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕ,

пĕр-пĕрине сĕнсăр пулса тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕрине лайăх кŭрнĕссем пек килĕштерсе ĕçлесе, Совет Союзĕпе Китай Республики хушшинче яланах пулнă туслă çыхăнусене çирĕплетес тесе,

пĕтĕм тĕнчери çак вăрçăра Пĕрлешнĕ Нацисен тăнманĕскер агрессине хирĕç кĕрешсе ĕçре пĕр-пĕрне пулăшнăран пулса тата Японие хирĕç пĕрле вăрçнă вăхăтра Японие пĕр сăмахсăрах парăнтарайманнисем пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлесĕпĕн пулса,

икĕ çĕршывăн халăхĕсен тата мире юратакан мĕнпур нацисен ырăлăхĕпĕн мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăрас ĕçре ялан пĕр-пĕрине килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнине палăртса,

Пĕрлешнĕ Нацисен 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пĕрле тунă Декларацийĕпе, тăвату державăн Мускавра 1943 çулхи октябрĕн 30-мĕшĕнче алă пуснă Декларацийĕнче тата пĕтĕм тĕнчери «Пĕрлешнĕ Нацисем» ятлă организацин уставĕнче пĕлтернĕ принципсем тăрăх ĕçлесе,

çак Договора çырса алă пусма йышăнчĕç те ăна алă пусма çаксене полномочи панĕç:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕпе—Вячеслав Михайлович Молотова, СССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне;

Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕпе—Ван Ши-цзене, Китай Республикин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне;

çаксем вара хăйсен полномочийĕсене, кирлĕ формăпа йĕркеллĕ çырнăскерсене, пĕр-пĕрне парса улăштарнă хыççăн çакăн пирки калаçса татăлчĕç:

### 1-МĔШ СТАТЬЯ

Калаçса татăлакан Икĕ Аслă Çĕршыв, ытти Пĕрлешнĕ Нацисемпе пĕрле пулса, Японие хирĕç ăна татăкăлăн çĕнтерччĕнех вăрçма пулаççĕ. Калаçса татăлакан Икĕ Аслă Çĕршыв çак вăрçăра пĕр-пĕрне пур майпа та пулăшса тăма пулаççĕ.

### 2-МĔШ СТАТЬЯ

Калаçса татăлакан Икĕ Аслă Çĕршыв çапла тума пулаççĕ: Японине пĕччен калаçма тытăнмалла мар тата пĕр-пĕрине килĕштермесĕр Японин хăйăн правительствине те, Японкре тунă кирек мĕнле ытти правительствăпа та е власть органĕпе, агрессиллĕ шухăшсене усçăнах пăрахманнисемпе, перемири тумалла мар.

### 3-МĔШ СТАТЬЯ

Калаçса татăлакан Икĕ Аслă Çĕршыв Японие хирĕç пыракан вăрçă пĕтнĕ хыççăн, Японие тепĕр хут агресси туса мире пăсма май парас мар тесе, хăйсем пĕрле мĕн тума пултарнине пурне те тума пулаççĕ.

Калаçса татăлакан Икĕ Аслă Çĕршывран пĕрин ăна Япони тапăннă пирки Японие хирĕç вăрçмалла пулса тăрсан, Калаçса татăлакан Икĕ Аслă Çĕршывран тепĕри вăрçа хутшăнмалла пулмă çав шутлавать. Ыйтусене татса памашкăн Правлени ларăвĕнче сахалтан та 7 çын улмалла.

Правлени килĕнсе татăлайман паха ыйтусене пурне те тĕрĕс те тулăн татса памашкăн Калаçса татăлакан Икĕ Çĕршывăн Правительствисене памалла.

### 5-МĔШ СТАТЬЯ

Обществăра Ревизи Комитечĕ пулать, унта 6 член пулать, вĕсенчен виççĕшне Китай Правительстви уйăрса лартать, виççĕшне—Совет Правительстви. Ревизи Комитечĕн Председательне совет гражданĕсем пулса тăракан членсенчен, Председатель Заместительне—Китай гражданĕсем пулса тăракан членсенчен суйлаççĕ. Ревизи Комитетĕнче Председатель сасси икĕ сасă шутланать. Ыйтусене татса памашкăн Ревизи Комитечĕн ларăвĕнче сахалтан та 5 çын пулмалла.

### 6-МĔШ СТАТЬЯ.

Кулленхи ĕçсене туса пымашкăн Правлени СССР гражданĕсенчен Китайри Чанчунь чугун çулĕн Управляющине, Китай Республикин гражданĕсенчен—Управляющи Заместительне уйăрса лартать.

### 7-МĔШ СТАТЬЯ

Ревизи Комитечĕ Главнăй контролера тата унăн Заместительне уйăрса лартать. Главнăй контролер пулма Китай гражданĕсенчен, унăн заместителĕ пулма совет гражданĕсенчен уйăрса лартаççĕ.

### 8-МĔШ СТАТЬЯ

Службăсемпе çул отделĕсен Начальникĕсемпе Начальник Заместителĕсене, çавăн пекех тата пысăк станцисен Начальникĕсене Правлени уйăрса лартать. Çул Управляющийĕ çав выраçсене лартма кандидатсем сĕнме пултарать. Правлении уйрăм членĕсем те, çул Управляющийĕне калаçса татăлсан, çав кандидатсене сĕнме пултараççĕ.

Служба е Отдел Начальникĕ Китай гражданинĕ пулсан Начальник Заместителĕ Совет гражданинĕ пулмалла. Служба е Отдел Начальникĕ Совет гражданинĕ пулсан — Начальник Заместителĕ Китай гражданинĕ пулмалла.

Службăсемпе Отделсен Начальникĕсене тата вĕсен Заместителĕсене, çавăн пекех тата станцисен Начальникĕсене Совет тата Китай гражданĕсенчен пĕр пек хисеппе уйăрса лартаççĕ.

### 9-МĔШ СТАТЬЯ

Чугун çула сыхлассишĕн Китай Правительстви ответлă пулса тăрать. Чугун çул çинчи çуртсене, оборудование тата ытти тĕрлĕ пурлăха сыхламашкăн, çавăн пекех тата чугун çулпа турттарса çŭрекен таварсем ан пăсăлччăр, ан çухалччăр тата вĕсене ан çаратчăр тесе, Китай Правительстви чугун çул полицийĕ туса хурать тата ăна контроллесе тăрать. Çав полицин çавăнпа пĕрлех тата чугун çул çинче яланхи пек йĕрке туса тăмалла. Çак статьяна пурнăçлас тĕлĕшпе полицин мĕн-мĕн тумаллине Китай Правительстви Совет Правительствипе канашласа палăртса хурать.

### 10-МĔШ СТАТЬЯ

Совет çарĕсене Японипе вăрçнă вăхăтра кăна çав çулпа илсе çŭреме юрать.

Совет Правительстви çар пурлăхне таможньăна пăхтармасăр, пичетленĕ вагонсене тиесе, транзит йĕркипе турттарма пултарать. Çав вагонсене чугун çул полицийĕ хуралламалла, вара Совет Союзĕ вĕсене хуралласа пыма хăйĕн хĕсĕнмаллă хуралне ямасть.

### 11-МĔШ СТАТЬЯ

Пĕр совет станцийĕнчен тепĕрне, çавăн пекех тата совет территорийĕнчен Дальний порчĕне Порт-Артур портне е унтан каялла транзит йĕркипе куçаракан таварсенчен Китай Правительстви пошлина е ытти тĕрлĕ налогсемпе тŭлевсем илмест. Китай территорине çитсен, çав таварсене тамăжния пăхать.

### 12-МĔШ СТАТЬЯ

Китай Правительстви чугун çула хăйне уйрăм килĕшŭ тăрăх çĕркамрăк кирлĕ таран парса тăрать.

### 13-МĔШ СТАТЬЯ

Китай Правительстви, Китайри государство аллинче тăракан чугун çулсенчен илнĕ пекех, çав çултан налогсем илет.

### 14-МĔШ СТАТЬЯ

Калаçса татăлакан Икĕ Çĕршыв Китайри Чанчунь чугун çулĕн Правленине çул Уставĕнче кăтартнă чухлĕ оборотлăх укçа пама килĕшеççĕ.

Чугун çулпа усă курнă май пулнă усламсемпе убытоксене икĕ çĕршыв çурмаран пайлаççĕ.

### 15-МĔШ СТАТЬЯ

Калаçса татăлакан Икĕ Çĕршыв çак Килĕшĕве алă пуснă хыççăн пĕр уйăх хушшинче кашни хăйсенчен виçшер çын уйăрса хураççĕ, çав çынсем вара Чунцинра чугун çулпа пĕрле усă курасси çинчен Устав çырса хатĕрлеççĕ. Çав Устава икĕ уйăх хушшинче çырса пĕтермелле, унтан вара ăна çирĕплетме икĕ Правительствăна та тăратмалла.

### 16-МĔШ СТАТЬЯ

Совет Союзĕпе Китай Республикин пĕрлехи харпăрлăхĕ туса пĕрле усă курмал-

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

## СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ

### СССР СОЮЗĔПЕ КИТАЙ РЕСПУБЛИКИ ХУШШИНЧИ ТУСЛĂХПА СОЮЗ ÇИНЧЕН ТУНĂ ДОГОВОРА ТАТА СССР СОЮЗĔПЕ КИТАЙ РЕСПУБЛИКИ КИТАЙРИ ЧАНЧУНЬ ЧУГУН ÇУЛĔ ÇИНЧЕН, ПОРТ-АРТУР ÇИНЧЕН ТАТА ДАЛЬНИЙ ПОРТ ÇИНЧЕН ТУНĂ КИЛĔШŬСЕНЕ ÇИРĔПЛЕТЕССИ ÇИНЧЕН

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнса çирĕплетнĕ тата СССР Верховный Совет Президиумне çирĕплетме тăратнă çак документсене, 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕнче Мускавра алă пуснăскерсене, **çирĕплетес:**

1. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики хушшинчи туслăхпа союз çинчен тунă Договора,

2. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики Китайри Чанчунь чугун çулĕ çинчен тунă Килĕшĕве,

3. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики Порт-Артур çинчен тунă Килĕшĕве,

4. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики Дальний порт çинчен тунă Килĕшĕве.

**СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.**
**СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1945 çулхи августăн 24-мĕшĕ.

## Совет Информаци Бюровĕнчен

### АВГУСТĂН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 26-мĕшĕнче Инçет-Хĕвелтух ăçĕнче пирĕн çарсем çаплах малалла куçса пынă.

ИНÇЕТ-ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 1-мĕш ФР ОНТ çарĕсем САХАЛИН утравĕн кăнтăр пайĕнче РУДАКА хулине йышăннă.

ИНÇЕТ-ХĔВЕЛТУХĂÇĔНЧИ 2-мĕш ФР ОНТ çарĕсем КАМЧАТКАРАН кăнтăртарахра Курильски утравĕсен ушкăнĕнче тăра кан ОНЕКОТАН, СЯСИКОТАН тата МАЦУВА утравĕсене йышăннă.

Августăн 25-мĕшĕнче японецсен 35.000 салтакĕпе офицерĕ ытла пирĕн çарсене тытăкăна парăннă, вĕсен шутĕнче 6 генерал пур.

Японецсен парăнакан чăтăсемпе соединенийĕсене йышăнасси малалла пырать.

**СОВИНФОРМБЮРО.**

### АВГУСТĂН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 27-мĕшĕнче Инçет-Хĕвелтухăçĕнче палăрмалла улшăнусем пулса иртмен.

Августăн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсене япон ецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 30.000 çын ытла тытăкăна парăннă.

Япони çарĕн парăнакан чăтăсемпе соединенийĕсене йышăнас ĕç малалла пырать.

**СОВИНФОРМБЮРО**

## Уйăн е пĕр пучах та тăккаласа ан юлтăр

НЕПРЕÇ. Нумаях пулмаст ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Чăваш республикинчи колхозсемпе совхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă чухне тырпула тăккалаканине хирĕç кĕрешмелли мероприятисем çинчен» постановлени йышăнчĕ.

«Большевик» колхозра çак постановление пур бригадăсенче те тĕплĕн сŭтсе-явнă хыççăн тырпул пухса кĕртес ĕç чылай лайăхланчĕ. Колхоз, ыраша пĕр тăккаламасăр пухса кĕртсе, августăн 21-мĕшĕнче çуртырри вырма тухрĕ.

Турпула уя тăккаласа хăварнинне хирĕç кĕрешес майпа кунта колхоз активĕнчен комисси организацилене. Çав комисси, бригадăсемпе звеносенче пулса, тырă вырас ĕçĕн пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăрать. 1-мĕш, 3-мĕш тата 5-мĕш бригадăсен участокĕсенче пĕр пучах та хире тăкăнса юлман.

4-мĕш бригадăра вара тырпула тăккаласа выраççĕ. Бригадир Роман Моисеев бригада ĕçне япăхтарса янă, колхозниксен ĕçĕсене тĕрĕслесе, ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илсе пыман. Çакна шута илсе, колхоз правленийĕ ăна ĕçрен кăларчĕ, ун вырăнне çак кунсенче фронтран таврăннă воина—Федор Сеннова уйăрса лартрĕс. Халĕ ку бригадăра тырпул пухса кĕртес ĕç пысăк пахалăхпа пулса пырать. Бригадир Сеннов ĕçкунĕсене шута илнĕ чух чи малтан ĕç пахалăхĕ çине тимлĕн çаврăнса пăхать.

Колхоз государствăна тырă парас тĕлĕшпе те хăйĕн графикне ăнăçлан пурнăçласа пырать.

Кĕçех колхозниксем трактор сеялкисемпе анлăн усă кураççĕ. Колхоз нурĕ 130 гектар ыраш акнă, вăл шутран çурринне ытла трактор сеялкисемпе акнă.

**В. АНДРЕЕВ.**

## МТС машинисем ĕçлемеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, августăн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). МТС тырпул пухса кĕртес ĕçе ытла та çитĕлĕксĕр хутшăнать. МТС-ра ялхуçалăх машинисене пурне те ĕçе яман: 7 молотилкăран 2-шĕ, 6 комбайнран 5-шĕ кăна ĕçе тытăннă. Çавна пула МТС нурĕ те 115 тонна çеç тырă çаннă. Комбайнсемпе вара 40 гектар çинчи тырра çеç вырса пустарнă.

Уйрăмăнах ĕçре 6-мĕш бригада (бригадирĕ Т. Афанасьев) кая юлса пырать. Ку бригада çураки ĕçĕсен планне 25 процент, кĕрхи çĕртме планне 12 процент çеç тултарнă. 1028 килограмм ытламинн горючи пĕтернĕ.

Трактористсем хушшинче нимĕнле политмасăллă ĕçе те тумаççĕ. Çавна пула трактор бригадинчи рабочисем хушшинче ĕç дисциплини чăтма çук япăхса кайнă. МТС тракторĕсем час-часах пăсăлса уйăра ĕçлемесĕр лараççĕ.

Районри чылай колхозсем алăпа тырă выраççĕ, анчах МТС молотилкăсене юсама васкамасть.

**Н. АНДРЕЕВ.**

**РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВГУСТĂН 25-мĔШĔ ТĔЛНЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ТАТА КĔРХИ ТЫРĂСЕНЕ АКАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН**

**СВОДКА**

**(Процентпа)**

| Районсем | Тырă выра | Капан тунă | Аван çапнă | Кĕрхи тырă анă |
|---|---|---|---|---|
| Вăрнар | 70,3 | 32,6 | 23,9 | 75,1 |
| Советски | 69,7 | 23,1 | 17,6 | 76,7 |
| Етĕрне | 63,1 | 24,5 | 18,1 | 45,4 |
| Вăрмар | 62,5 | 27,0 | 18,5 | 50,8 |
| Сĕнтĕрвăрри | 61,3 | 39,4 | 31,4 | 55,8 |
| Красноар-ски | 61,3 | 29,1 | 19,9 | 74,6 |
| Калинино | 61,1 | 22,8 | 18,3 | 73,6 |
| Шупашкар | 60,2 | 43,0 | 36,2 | 69,2 |
| Хĕрлĕ Чутай | 60,2 | 33,8 | 24,0 | 43,0 |
| Çĕрпŭ | 60,0 | 25,8 | 23,2 | 57,8 |
| Чурачăк | 59,7 | 30,7 | 24,5 | 73,6 |
| Шăхасан | 59,5 | 29,3 | 28,6 | 65,9 |
| Сĕнтĕр | 58,2 | 26,2 | 33,8 | 65,2 |
| Элĕк | 58,1 | 25,6 | 22,6 | 63,6 |
| Чкаловски | 58,0 | 35,0 | 28,6 | 57,8 |
| Шăмăршă | 57,8 | 57,0 | 30,6 | 40,0 |
| Муркаш | 57,7 | 27,8 | 24,1 | 63,6 |
| Октябрьски | 57,2 | 48,9 | 36,7 | 65,6 |
| Куславкка | 56,7 | 25,2 | 25,9 | 44,6 |
| Елчĕк | 56,5 | 28,3 | 22,1 | 72,0 |
| Канаш | 56,3 | 49,6 | 46,5 | 67,9 |
| Тăвай | 55,8 | 33,7 | 27,5 | 45,1 |
| Ишлей | 55,7 | 28,7 | 24,1 | 55,0 |
| Пăрачкав | 55,2 | 40,9 | 28,7 | 35,1 |
| Первомайски | 51,9 | 30,9 | 28,6 | 52,9 |
| Комсомольски | 49,5 | 35,0 | 31,7 | 55,6 |
| Сĕмĕрле | 48,0 | 38,3 | 20,0 | 28,9 |
| Йĕпреç | 47,8 | 37,9 | 38,3 | 46,8 |
| Улатăр | 46,7 | 34,1 | 29,9 | 27,2 |
| Кувакино | 38,1 | 33,8 | 27,7 | 20,5 |

**РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ АВГУСТĂН 25-МĔШĔ ТĔЛНЕ ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРПУЛ ПАРАС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН**

**СВОДКА**

**(Процентпа)**

| РАЙОНСЕМ | Тырă пана |
|---|---|
| Сĕнтĕрвăрри | 16,9 |
| Чурачăк | 16,2 |
| Етĕрне | 15,3 |
| Çĕрпŭ | 12,8 |
| Октябрьски | 11,3 |
| Шупашкар | 11,1 |
| Вăрнар | 10,0 |
| Калинино | 9,9 |
| Куславкка | 9,8 |
| Муркаш | 9,2 |
| Красноармейски | 9,1 |
| Улатăр | 8,9 |
| Елчĕк | 8,5 |
| Сĕнтĕр | 8,4 |
| Шăхасан | 7,6 |
| Советски | 7,3 |
| Хĕрлĕ Чутай | 7,2 |
| Комсомольски | 7,1 |
| Элĕк | 6,8 |
| Пăрачкав | 6,6 |
| Шăмăршă | 6,0 |
| Сĕмĕрле | 5,7 |
| Тăвай | 5,4 |
| Ишлей | 5,2 |
| Канаш | 4,7 |
| Первомайски | 4,4 |
| Вăрмар | 4,2 |
| Чкаловски | 4,0 |
| Йĕпреç | 2,7 |
| Кувакино | 0,9 |

# Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики Чанчунь чугун çулĕ çинчен тунă КИЛĔШŬ

*Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.*

ли пурлăха Комисси палăртмалла, çав Комиссие кашни Правительство виçшер сыпăка уйăрса хумалла. Вăл Комиссие çак Килĕшĕве алă пуснă хыççăн пĕр уйăх хушшинче Чунцинра туса хумалла. Çав Комиссин хăйĕн ĕçне чугун çулпа усă курма пуçланă хыççăн виçĕ уйăх хушшинче туса пĕтермелле те хăйĕн сĕнĕвĕсене çирĕплетме икĕ Правительствăна та тарăтмалла.

### 17-МĔШ СТАТЬЯ

Çак Килĕшĕве вăтăр çуллăха тунă. Çав срок иртсен, Китайри Чанчунь чугун çулĕ хăйĕн мĕнпур пурлăхĕпе пĕрле пĕтĕмпех Китай Республикин харпăрăхĕ пулса тăрать.

### 18-МĔШ СТАТЬЯ

Çак Килĕшŭ ăна çирĕплетнĕ хыççăнах вăя кĕрет.

Ăна Мускавра 1945 çулхи августăн вунтăваттăмĕшĕнче, урăхла каласан, Китай Республикине тунăранпа вăтăр тăваттăмĕш çулхи августăн вунтăваттăмĕшĕнче, икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата китайла çырнă. Икĕ текст те пĕр пекех тĕрĕс шутланаççĕ.

Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕ хушнипе
ВАН ШИ-ЦЗЕ.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе
В. МОЛОТОВ.

# Порт-Артур çинчен тунă КИЛĔШУ

Каласса татăлакан Икĕ Çĕршыв, Совет Союзĕпе Китай хушшинчи туслăха союз çинчен тунă Договорпа килĕштерсе, ун сумне хушса кĕртни вырăнне хурса, çакăн çинчен каласса татăлчĕç:

I. Китайпа ССР Союзĕн хурăнсăрлăхне çирĕплетес тесе тата Япони малашне тума пултаракан агрессирен сыхланса тăрас тесе, Китай Республикин правительстви Порт-Артура каласса татăлакан Икĕ Çĕршыв, ăна тинĕс-çар бази вырăнне хурса, пĕрле усă курмалла тума килĕшет.

II. Çак малтанхи пунктра кăтартнă тинĕс-çар базин районĕн тĕрĕс чиккисене çак килĕшŭ сумне хушса кĕртсе çырса кăтартнинче тата карта çинче палăрса тăрассĕ (хушса кĕртнине пăхăр).

III. Каласса татăлакан Икĕ Çĕршыв Порт-Артура тинĕс-çар бази çеç туса хума килĕшрĕç. Унпа Китайпа ССР Союзĕн çар карапĕсемпе суту-илŭ карапĕсем çеç усă курма пултараççĕ.

Çак асăннă тинĕс-çар базине пĕрле ă курас ыйтăва йĕркелесе пымашкăн Китайпа Совет Союзĕн çар комиссине анаççĕ, çав комиссине Китайран икĕ представитель, Совет Союзĕнчен виçĕ представитель кĕрет. Комиссин председателĕ Совет Союзĕн представителĕ, вице-председательĕ—Китай представителĕ пулать.

IV. Çак асăннă тинĕс-çар базине хŭтĕлес ĕçе Китай правительстви ССРР правительстви аллине парать. Çак тинĕс-çар базине хŭтĕлес шутпа ССРР правительстви унта тивĕçлĕ сооруженисем тăвать, çак сооруженисене тума тухакан тăкака ССР правительстви хăй тŭлет.

V. Çак районри граждансла администрацин Китайăн пулать, анчах та ертсе пыракан вырăнсене лартнă чухне Китай правительстви ССР Союзĕн çак районри интересĕсене шута илсе пырать. Порт-Артурти граждансла администрацие Китай правительстви Совет Союзĕн çар командованийĕпе килĕштерсе вырăна лартать е вырăнтан кăларать.

Çак районри Совет Союзĕн çар командованийĕ хăрушсăрлăх ĕçĕпе оборона ĕçне лайăхлатас тесе Китайăн граждансла администрацине нама пултаракан сĕнŭсене Китайăн граждансла администрацине пурнăçа кĕртсе пырать. Тавлашуллă ыйтусене вара Китайпа Совет Союзĕн çар комиссийĕ пăхса тухса татса парать.

VI. СССР правительстви П-мĕш пунктра кăтартнă районра хăйĕн çар, тинĕс-çар тата сывлăш вăйĕсене тытса тăрас вĕсене кирлĕ пек вырнаçтарса тухма пултарать.

VII. Çак районра тинĕсри хăрушăхсене асăрхаттармалли маяксене, сигнализацине тата ытти тĕрлĕ оборудование туса тытса тăрассине Совет правительстви хăй çине илет.

VIII. Çак килĕшŭре палăртнă срок иртнĕ хыççăн ССР Союзĕ çак районра туса лартнă мĕнпур оборудование тата имуществăллă пурлăха пĕр тŭлевсĕрех Китай правительствине парса хăварать.

Çак килĕшŭ 30 çул хушши законлă пулса тăрать. Килĕшŭ çирĕплетнĕ кунран пуçласа вăя кĕрет.

Çŭлерех калаçнисене çирĕплетес тесе уполномоченнăйсем çак килĕшĕве алă пусса ун çине хăйсен пичечĕсене пусрĕç.

Мускав хулинче 1945 çулхи августăн вунтăваттăмĕшĕнче, урăхла каласан, Китай республикине тунăранпа вăтăр тăваттăмĕш çулхи августăн вунтăваттăмĕш кунĕнче, икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата китайла çырнă. Икĕ текст та пĕр пекех тĕрĕс шутланаççĕ.

Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕ хушнипе
ВАН ШИ-ЦЗЕ.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе
В. МОЛОТОВ.

# Дальний порт çинчен тунă КИЛĔШŬ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Китай Республики пĕр-пĕрни хушшинчи туслăха союз çинчен тунă Договора шута илсе, çавăн пекех тата ССР Союзĕ Китайăн уйăлми пайĕсем пулса тăракан Хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцире Китайăн суверинитетне хисеплесе гаранти панине шута илсе, ССР Союзне таварсем туртăрса килмелли тата туртăрса каймалли порт пулса тăракан Дальний портра Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн интересĕсене сыхлас тесе, Китай Республики çапла тума килĕшет:

I. Дальний порт пур çĕршывсемшĕн те суту-илŭ карапĕсене кĕрсе çŭреме ирĕклĕ порт пулса тăрать.

II. Китай правительстви çак кăтартнă ирĕклĕ портра ССР Союзне уйăм килĕшŭ тăрăх тара памалăкăн пристаньсемпе складсем уйăрса пама килĕшет.

III. Дальний портри администраци Китайăн пулать.

Порт начальникне Китайри Чанчунь чугун çул управляющийĕ Дальний хулин мэрĕне килĕштерсе совет гражданинне уйăрса лартать. Начальник помощникне вара çав çŭлте кăтартнă йĕркепех Китай гражданинне уйăрса лартать.

IV. Мирлĕ вăхăтра Дальний порта 1945 çулхи август уйăхĕн 14-мĕшĕнче Порт-Артур çинчен тунă килĕшŭре тинĕс-çар базисем çинчен кăтартса панă положенисем тивмест. Японине вăрçă пуçланастăвас пулсан вара вăл çак зонăра тунă вăрçă режимне пăхăнса тăма тытăнать.

V. Çак ирĕклĕ порта ют çĕршывсенчен килекен таварсемшĕн, вĕсене Китайри Чанчунь чугун çулĕ тăрăх тŭрех ССР Союзне илсе каяççĕ пулсан, тата ССР Союзĕнчен çав асăннă чугун çул тăрăх ирĕклĕ порт урлă ют çĕршывсене илсе каймалли таварсемшĕн е портри строительстваша оборудовани валли ССР Союзĕнчен илсе каякан материалсемшĕн таможня пошлинине тŭлеттермеççĕ. Çакăнта асăннă таварсене чугун çул тăрăх пичетленĕ вагонсенче турттарса çŭремелле.

Ирĕклĕ порт урлă Китая илсе пыракан таварсемшĕн Китайăн кŭрсе килнĕ таварсемшĕн илекен пошлинине тŭлеттереççĕ. Китайăн ытти пайĕсенчен ирĕклĕ порта илсе пыракан таварсемшĕн Китайра пошлинăсем илсе тăнă вăхăт тăршшĕнче вара яланах экспорт пошлинисем тŭлеттереççĕ.

VI. Çак килĕшŭ 30 çул хушши законлă пулса тăрать.

VII. Çак килĕшŭ çирĕплетнĕ кунран пуçласа вăя кĕрет.

Çакна çирĕплетес тесе уполномоченнăйсем çак килĕшĕве алă пусса ун çине хăйсен пичечĕсене пусрĕç.

Мускав хулинче 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕнче, урăхла каласан Китай Республикине тунăранпа вăтăр тăваттăмĕш çулхи августăн вунтăваттăмĕш кунĕнче, икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата китайла çырнă. Икĕ текст та пĕр пекех тĕрĕс шутланаççĕ.

Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕ хушнипе
ВАН ШИ-ЦЗЕ.

ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе
В. МОЛОТОВ.

## Халь Японие хирĕç пĕрле кĕрешнине пула совет çарĕсем Китайăн хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцин территорине пырса кĕнĕ хыççăн Совет Главнокомандующийĕпе Китай администрацийĕ хушшинчи çыхăнусем мĕнле пулмалли çинчен тунă КИЛĔШŬ

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ Верховный Совет Президиумĕ тата Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕ халь Японие хирĕç пĕрле кĕрешнине пула совет çарĕсем Китайăн хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцин территорине пырса кĕнĕ хыççăн Совет Главнокомандующийĕпе Китай администрацийĕ хушшинчи çыхăнусем Икĕ Çĕршыв хушшинчи туслăха тата союзлă çыхăнусене тивĕçлĕ пулччăр тесе, çакăн çинчен калаçса татăлчĕç.

1. Вăрçă ĕçĕсем малалла пынине пула совет çарĕсем Китайăн хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцин территорине пырса кĕнĕ хыççăн, вăрçă операцийĕсене туса пыма кирлĕ вăхăт хушшинче вăрçă пыракан зонăсенче вăрçă ĕçĕсене тивекен пур ыйтусем телĕшпе те верховнăй власть тата ответлăх Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Главнокомандующийĕ аллине куçать.

2. Китая тавăрса паракан территорие тытса тăма Китай Республикин Наци Правительствин представительне тата уйăм штат уйăрса лартаççĕ. Вĕсем çаксене туса пыраççĕ:

а) тăшманран тасатнă территори çинче Китай законĕсемпе килĕштерсе администраци туса лартаççĕ тата унăн ĕçне ертсе пыраççĕ;

в) Китая тавăрса паракан территорие Китайăн хĕçпăшаллă регулярнăй вăйĕсене, çавăн пекех тата регулярнăй мар вăйĕсене, Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене пуланă парассĕ тата вĕсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеттерсе пыраççĕ;

с) Китай администрацине Совет Главнокомандующийĕпе килĕштерсе ĕçлемелле тăваççĕ. Уйрăмăн илсен, вырăнти органсене Совет Главнокомандующийĕн требованийĕсемпе ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртсе пыма кăтарту паракаçĕ.

3. Совет Главнокомандующийĕпе Китай Республикин Наци Правительствин представительне пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелле тăвас тесе, Совет Главнокомандующийĕн штабĕ çумĕнче Китайăн çар миссине уйăрса лартаççĕ.

4. Совет Главнокомандующийĕн верховнăй власне пăхăнса тăракан зонăсенче Китай Республикин Наци Правительствин Китая тавăрса паракан территорири администрацийĕ Совет Главнокомандующийĕпе Китай Республикин Наци Правительствин представителĕ уралă сыхăну тытса тăрать.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ хушнипе
В. МОЛОТОВ.

5. Китая тавăрса паракан территорин кирек хăш пайĕ те вăрçă вони пулма чарăнсанах, Китай Республикин Наци Правительстви граждансла ĕçсем енĕпе мĕнпур власа хăй çине илет те, вара хăйĕн граждансла тата çар органĕсем урлă Совет Главнокомандующине пур майсемпе те пулăшу парса пырать.

6. Китай территоринчи советăн хĕçпăшаллă вăйĕсен составне кĕрекен пур çынсем те Совет Главнокомандующийĕпе совет законĕсене пăхăнса тăраççĕ. Китай çыннисем вара пурте, вĕсем граждансла е çар çыннисем пулсан та, Китай правительствипе Китай законĕсене пăхăнса пурăнаççĕ. Çак йĕрке Китай территоринчи граждансла çынсем советăн хĕçпăшаллă вăйĕсене хирĕç тунă ĕçсемпе преступленисем тĕлĕшĕпе те вырăнлă пулать, анчах та çав преступленисемпе ĕçсене вăрçă зонисенче тунă пулсан, айăпа кĕнĕ çынсене вара Совет Главнокомандующийĕ Китай Республикин Наци Правительствин представителĕ пĕр-пĕринпе килĕштерсе татса параççĕ.

7. Китайăн Хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцин территорине совет çарĕсем пырса кĕнипе çыхăнса тăракан финанс ыйтăвĕсене уйăм килĕшŭпе татса параççĕ.

8. Çак Килĕшŭ пазн ССР Союзĕпе Китай хушшинчи туслăха союз çинчен туса алă пуснă Договора çирĕплетнĕ хыççăнах вăя кĕрет.

Мускав хулинче 1945 çулхи августăн вунтăваттăмĕшĕнче, урăхла каласан, Китай Республикине тунăранпа вăтăр тăваттăмĕш çулхи августăн вунтăваттăмĕш кунĕнче, икĕ экземпляр çырса хатĕрленĕ, кашнине вырăсла тата китайла çырнă. Икĕ текст та пĕр пекех тĕрĕс шутланаççĕ.

Китай Республикин Наци Правительствин Президенчĕ хушнипе
ВАН ШИ-ЦЗЕ.

## ССР Союзĕпе Югослави хушшинчи туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договора çирĕплетнине кăтартакан грамотăсене улăштарни

БЕЛГРАД, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Югославин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн заместителĕсем Белебитна Гаврилович, ют çĕршыв ĕçĕсен министерствинче отдел руководителĕсем тата министерствăри ответлă ытти сотрудниксем те. Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: ССР Союзĕн Югославири посолĕ И. В. Садчиков, Совет Союзĕн çар миссийĕн начальникĕ А. Ф. Киселев генерал-майор тата совет посольствинчи ответлă ытти сотрудниксем те.

Шубашич докторна И. В. Садчиков çĕнĕ махсем калаçă.

ССР Союзĕпе Югослави хушшинчи туслăх, пĕр-пĕрне пулăшасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договора çирĕплетнине кăтартакан грамотăсене улăштарни çинчен тунă Договорăн 5-мĕш статьинче калаçнă пек, Китайăн шалти ĕçĕсене хутшăнма шутламасть.

Министр господин, Эсир çак çŭлерех каласа панă пунктсене çапла ăнланнинне çирĕплетсе каласан, вара çак нота тата Эсир ун çине панă ответ туслăхпа союз çинчен тунă Договорăн пайĕ пулса тăраççĕ.

Сире, Министр господин, эпĕ питĕ хисеплетĕп.

В. МОЛОТОВ.

Ван Ши-цзе господина
Китай Республикин Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрне.

Мускав.

* * *

Хăйĕн ответлă нотинче Китайăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ван Ши-цзе господин çŭлерех каласа панă пунктсене хăй пĕтĕмпех çапла ăнланнине пĕлтернĕ.

### МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИН НИКАМА ПĂХĂНМАНЛĂХĔ ÇИНЧЕН

Китайла сырнинчен куçарнă

Мускав, 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕ.

Халăх Комиссарĕ господин,

Тулашри Монголи халăхĕ хăйне никама пăхăнмалла мар тума тăрăшнине темиçе хутчен те каласа панине шута илсе, Китай правительстви çапла пĕлтерет: Япони парăннă хыççăн Тулашри Монголи халăхĕ плебисцитра хăйĕн çак шухăш-кăмăлне çирĕплетсе парать пулсан, Китай правительстви вара халăхи чикĕсенче вырнаçса тăракан Тулашри Монголин никама пăхăнманлăхне йышăнать.

Çакăнта калани Китай Республикинне ССР Союзĕ 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕнче туслăха союз çинчен туса алă пуснă Договора çирĕплетнĕ хыççăн вăй илет.

Сире, Халăх Комиссарĕ господин, эпĕ питĕ хисепленнине шанма пултаратăп.

ВАН ШИ-ЦЗЕ.

В. М. Молотов господина
ССРР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне.
Мускав.

* * *

Мускав, 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕ.

Министр господин,

Эсир янă нотăна илни çинчен çирĕплетсе халатăп. Унта Эсир çапла пĕлтертĕр:

«Тулашри Монголи халăхĕ хăйне никама пăхăнмалла мар тума тăрăшнине темиçе хутчен те каласа панине шута илсе, Китай правительстви çапла пĕлтерет: Япони парăннă хыççăн Тулашри Монголи халăхĕ плебисцитра хăйĕн çак шухăшкăмăлне çирĕплетсе парать пулсан, Китай правительстви вара халăхи чикĕсенче вырнаçса тăракан Тулашри Монголин никама пăхăнманлăхне йышăнать.

Çакăнта калани Китай Республикинне ССР Союзĕ 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕнче туслăха союз çинчен туса алă пуснă Договора çирĕплетнĕ хыççăн вăй илет».

Совет правительстви Китай Республикин Правительствин çак çŭлерех кăтартнотине хăпăл туса йышăнать те хăй енчен çапла каласа парать: Совет Союзĕ Монголи Халăх Республикин (Тулашри Монголин) государство тĕлĕшĕнчи никама пăхăнманлăхне тата территори пĕрлĕхне хисеплесе тăрĕ.

Сире, Министр господин, эпĕ питĕ хисепленине йышăнма пултаратăп.

В. МОЛОТОВ.

Ван Ши-цзе господина,
Китай Республикин ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрне.
Мускав.

### КИТАЙĂН ЦЕНТРАЛЬНАЙ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ПУЛĂШУ ПАРАССИ ÇИНЧЕН, МАНЬЧЖУРИЕ КИТАЙ ПĂХĂНТАРАССИ ÇИНЧЕН ТАТА СИНЬЦЗЯНРЕ ПУЛСА ИРТНĔ СОБЫТИСЕМ ÇИНЧЕН

Мускав, 1945 çулхи августăн 14-мĕшĕ.

Хисеплĕ Министр господин,

паян Китайна ССР Союзĕ хушшинчи туслăха союз çинчен тунă Договора алă пуснă май, эпĕ çак ăнларах кăтартса паракан положенисене калаçса татăлакан Икĕ Çĕршыв та çапла ăнланасса шанса тăратăп:

1) Çŭлте асăннă Договорăн шухăшĕпе килĕштерсе тата унăн пĕтĕмĕпе идейине тĕллевĕсене пурнăçа кĕртес тесе, Совет правительстви Китая моральнăй пулăшу, çар снаряженисемпе тата ытти тĕрлĕ материальнăй ресурссемпе пулăшу парса пыма хатĕр, çак пулăшу пĕтĕмпех Китайри Центральнăй Правительство пулса тăракан Наци Правительствине пырса кĕмелле.

2) Дальний тата Порт-Артур порчĕсем çинчен тата Китайри Чанчунь чугун çулĕ пĕрле тытса тăрасси çинчен каласнă вăхăтра Совет правительстви хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцие Китай çĕршывĕн пайĕ вырăнне хурса пăхрĕ те, хĕвелтухăçĕнчи виçĕ провинцие пĕтĕмпех Китая пăхăнтарса тăмалла тăвассине килĕшнине, вĕсем территорине администраци тĕлĕнне те Китайна пĕрешлĕ пулса тăнане татах та тепĕр хут çирĕплетсе каласа панă.

3) Синьцзяне пулса иртнĕ событисене илсен, Совет правительстви çапла çирĕплетсе калать: Совет Союзĕ, туслăхпа союз çинчен тунă Договорăн 5-мĕш статьинче калаçнă пек, Китайăн шалти ĕçĕсене хутшăнма шутламасть.

Министр господин, Эсир çак çŭлерех каласа панă пунктсене çапла ăнланнинне çирĕплетсе каласан, вара çак нота тата Эсир ун çине панă ответ туслăхпа союз çинчен тунă Договорăн 5-мĕш статьинче калаçнă пек, Китайăн шалти ĕçĕсене хутшăнма шутламасть.

Сире, Министр господин, эпĕ питĕ хисеплетĕп.

В. МОЛОТОВ.

Ван Ши-цзе господина
Китай Республикин Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрне.

Мускав.

* * *

Хăйĕн ответлă нотинче Китайăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ван Ши-цзе господин çŭлерех каласа панă пунктсене çапла ăнланнинне пĕлтернĕ.

### ЮГОСЛАВИ СКУПЩИНИ ПĔРЛЕШНЕ НАЦИСЕН УСТАВНЕ ÇИРĔПЛЕТНИ

БЕЛГРАД, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). ТАНЮГ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕнче Югославин Вăхăтлăх Халăх Скупщини, пĕр кăмăллă пулса, Югославин пĕрлешнĕ нацисен уставне çирĕплетнĕ.

### СОВЕТ ДЕЛЕГАЦИЙĔ МАНИЛА ХУЛИНЕ ÇИТНĔ

ЛОНДОН, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 25-мĕшĕнче Совет Союзĕн çар представителĕсен делегацийĕ Манила хулине çитнĕ. Делегацие генерал-лейтенант Деревянко пуçпулса ертсе пырать. Ку делегаци Японни парăнни çинчен калавлашма ală пуснă çĕрте пулмалла.

### СОЮЗНИКСЕН ФЛОЧĔ САГАМИ ЗАЛИВНЕ КАЙМА ТУХНĂ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Манила хулинчи корреспонденчĕ панă хыпарсем тăрăх, Макартур генерал Японин император ставкине çапла пĕлтернĕ: августăн 26-мĕшĕнче Америка флочĕн соединенийĕсем Токио районĕнчи Сагами заливĕ патне куçма тытăннă.

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Гуам утравĕ çинчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: союзниксен тинĕс-çар флочĕн соединенийĕсем, мĕн пурĕ 383 судно, августăн 26-мĕшĕнче ирхине Японин шалти шывĕсене кĕме тытăнчĕç. Японексен хăйсем вăхăтлă халăлланă хетчикĕсем ертсе пыракан самолетсене сирсе яма тĕл килес пулсан, карапсем умĕнче авиносецсем çинчен вĕссе хăварнă 1.300 самолет вĕçсе пыраççĕ. Çав самолетсем кирлĕ мĕнле кĕтмен ĕçсем сиксе тухсан та вĕсене сирсе яма пултараççĕ.

Тĕнчере чи хăватлă тинĕс-çар вăйăсенчен пĕри пулса тăракан союзниксен флочĕ Токио патнелле куçса пырать.

Флота операцийĕсем тăвас енчен Хальси адмирал «Миссури» линкор çинчен контроллесе пырать, çав линкор çинчи Япони татăкланă парăнни çинчен калавлă акта алă пусаççĕ.

Союзниксен флотĕнче авăлхинчен 16 карапĕпе линкорĕ пур.

Англи флочĕн командующийĕ Фрезер флагман карапĕ пулса тăракан «Дюк Йоркский» линкор çинче пырать.

Америкăн тинĕс-çар вăйăсен шайĕнче 12 линкор кĕрет.

### ЭТТЛИ ГОНКОНГ ПИРИН КАЛАНИ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 24-мĕшĕнче премьер-министр Климент Эттли общинăсен палатинче çапла каланă: Гонконгра (Англин Китайри колонийĕ) японексен парăнăнине Англин çар командованийĕн представителĕсем йышăнаççĕ. Черчилль çапла ыйтнă: Англи правительстви çав колонире Англи администрацийĕ туса хурасси пирки мĕне утăмсем тунă, тесе ыйтнă. Эттли çапла ответ панă: ку колонире Англи администрацине çĕнĕрен туса хурас плансене пĕтĕмĕшпе пĕлтерĕнĕ, тенĕ.

Черчилль çавăн пек ответлă тав сăмах та малалла çапла ыйтнă: чиновниксем Англи правительстви Англин Индо-Китайăнчи çĕршывăсен суверинитетне хăварнă пекех çапла асту-пăсем те тума пултараççĕ-и, çапла асту-са тăрасса эпĕ шанма пултаратăп-и, тенĕ».

«Астуса тăрас», тенĕ Эттли.

### БОЛГАРИ ХАЛĂХ ПУХĂВНЕ СУЙЛАССИНЕ ТЕПĔР СРОКА ХĂВАРНИ

СОФИЯ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 24-мĕшĕнче Болгари правительстви халăх пухăвне (Болгари парламентне) суйлассине тепĕр срока хăварма йышăннă. Унченхи решени тăрăх, суйлавсем августăн 26-мĕшĕнче пулса иртмелле пулнă.

Болгари правительстви Союзниксен Контроль Комиссине кăтартнă суйлассине кайрантарах иртерме йышăнни çинчен, пĕлтернĕ. Союзниксен Контроль Комиссийĕ, çав решенине килĕшнĕ.

### ПОЛЬШАПА ШВЕЦИ ХУШШИНЧИ С УТУ-ИЛŬ ДОГОВОРНЕ АЛĂ ПУСНИ

ВАРШАВА, августăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Польпресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх Варшавăра Польшăна Швеци хушшинчи суту-илŭ договорне алă пуснă. Договорта çав икĕ çĕршыв хушшинче 1946-мĕш çулта пĕр-пĕрне мĕнле таварсем парса тăрасси çинчен калаçнă, çавăн пекех Швеци Польшăна 100 миллион шведски кронĕ чухлĕ кивçен укçа парасси çинчен калаçнă. Унсăр пуçне тата Польшăпа Швеци çĕркăмăрăк тăратасси çинчен калакан контракта алă пуснă.

### НИМĔÇСЕН КОНЦЕНТРАЦИ ЛАГЕРĔСЕНЧЕ МĔН ЧУХЛĔ ХАЛĂХ ПĔТНИ

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн Парижри корреспонденчĕ çапла çырать: вăрçă преступленийĕсене тĕпчекен комисси членĕсем каласа панă тăрăх, нимĕçсен мĕнпур концентраци лагерĕсенче вĕлернĕ çынсен хисепĕ, пĕтĕмпине илсен, 26 миллион çын, пулăнать. Вăрçă преступленийĕсене тĕпчекен комиссин Франци оккупацилеме зонăра хăйĕн агенчĕсем пур. Вĕсем айăпа çынсене йĕркесе тупаççĕ те арестлеççĕ. Корреспондент каланă тăрăх, çав арестленĕ çынсене Парижа илсе пыраççĕ, унта вара вĕсене комисси членĕсем допрос тăваççĕ. Миссин документĕсенче, свидетельсем çитсе панă тăрăх, 17.000 çынна вăрçă преступленийĕсемшĕн айăпланнăйсем пур. Çакăн пек допрос тума пĕлнĕ тăрăх ĕнтĕ комиссин официальнăй çыннисем нимĕçсен концентраци лагерĕсенче вĕлернĕ 26 миллион çын çинчен калакан сведение тĕрĕс тесе шутлаççĕ. Ку шута лагере илсе кайнă чухне е урăх çĕрте çул çинче вилнĕ çынсем кĕмеççĕ. Пуринчен ытларах Дахау лагерĕнче çынсене нумай вĕлернĕ. Кунта вăтамран шутласан, кашни кун 12—14 пин çын вĕлернĕ. 1944 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче маршал Гитлер палачĕсем «рекорд» тунă: çак кун кунта арçынсене, хĕрарăмсене тата ача-пăчасене 24.000 çын вĕлернĕ.

## Квислинга суд туни

ОСЛО, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Квислинг судĕнче свидетельсенчен малалла ыйтса пĕлнĕ. Квислинг «правительствин» «министрĕ», нимĕç шпионĕ тата Квислинга Берлинпа çыхăнтараканнĕ пулнă Хагелин халĕ те суд умне айăпланакан пулса тăман-ха. Енер ăна свидетель вырăнне тăратса ыйтнă. Кашни ыйту çинех тепĕ пек вăл: «Астумастăн», тесе ответ панă. Çапла вăл хăй Альфред Розенбергпа, Гитлерпа Редер адмиралпа тĕл пулнине, Квислингпа пĕрле Гитлер патĕнче пулнине, Квислинга Берлинпа çыхăнтарса тăнине тата ытти çынсене те «астумасть».

Вара вăл 1939 çулта Германи командованине Норвеги çинчен çав тери паха шпионла сведени панине кăтартакан документа вуласа парсан, Хагелин çав çавах «эпĕ ăна астумастăн», тесе ответ парать. Хагелина хăй çырса хăй алă пуснă шпионла документсене кăтартаççĕ. Вăл хăй алă пуснине йышăнать анчах çавах та ăна астумасса перет.

Тепĕр свидетель, Квислингпа, «наци пĕрлĕх» партийĕн кассирĕ пулнă Трутсен, çапла каласа панă: çак «парти» ушкăнтенкĕ тĕлĕшĕнчен малтанах начар пулнă, анчах 1939 çулта кĕркунне Квислинг ăна 70 пин крона пырса панă. «Ку ушкăна эпĕ Хагелинран илтĕм», тенĕ вăл. Çав ушкăна Хагелин нимĕçсенчен илнине тĕпчесе пĕлеççĕ.

Пумай свидетельсем Квислинг нимĕçсем пулăшнине власа мĕнле тытса илнине, Норвегири учительсене, пасторсене тата ытти çынсене те хĕсĕрлесе асаплантарнине кăтартса параççĕ.

Гитлерăн Норвегири рейхскомиссарĕн Тербовенăн сывăх сотрудникĕсенчен пĕри, Миллер ятлă нимĕç çынни, çапла каланă: эпир Квислингпа пĕрле Норвеги çинчен СССР Союзне хирĕç Хĕвелтухăçĕнчи фронта вăрçа яма мобилизаци тумалли планă хатĕрлерĕмĕр. Çакăн пек мобилизаци тăвас шухăша Квислинг пуçарса калаçĕ, тенĕ вăл.

Суд татах тепĕр 4—5 кун пымалла.

Ответлă редактор
заместителĕ Н. С. СТЕПАНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФ ОНСЕМ: редакторăн—0-87, заместителĕн—2-89, секретариатăн—4-20, пропаганда пайĕн—2-82, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн — 3-97, ялхуçалăх пайĕн—0-87, абсельхозсен пайĕн—0-67, издательство пайĕн — 0-23.

НТ 00229 Типография № 1 Управлени... ...рафпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. т. 53 42 ... л.